## АЙТӐР, ЙӐНӐШ ШЫРАР-ХА!

**Чӑваш чӗлхи уйӑхлӑхӗ тӗлне ятарлӑ конкурс! Кам ҫакӑнта панӑ предложенисенче пур йӑнӑша та тупма пултарать — ӑна ятарлӑ парне кӗтет. Пӗтӗмлетӳсене ака уйӑхӗн 25-мӗшӗнче тӑвӑпӑр.**

- «Нарспи» поэмӑра чухӑн тата пуян ҫын ҫинчен нумай сӑнар пур.
- Унсӑрӑн пуҫне Иванов ялне пуян тесе ҫырнӑ.
- Нарспи пуяна курса качча каяс темен.
- Сетнере юратса ҫылӑха кӗрсе юлчӗ сарӑ хӗр.
- Ман шутпа, хӑть мӗнле ҫыннӑн чи малтан чунне пӑхмалла, кайран душипе характерне.
- Ашшӗ-амӑшӗ Нарспие качча парас тесен анчах вӑл Сетнере юратнӑ.
- Нарспи Сетнер ятлӑ хресчен ҫемьери чухӑн каччӑна юратнӑ.
- Упӑшки Нарспие йытӑ вырӑнне хӑварса хӗненӗ.
- Нарспи Тӑхтамана мӗн калать, ҫавна вӑл веҫех тӑвать.
- Нарспи Тӑхтамана ҫапса пурӑннӑ.
- Сетнере ӑна пуртӑпа пуҫран параҫҫӗ те вӑл вилет.
- К.Иванов ӗмӗр пурӑнакан поэмӑсем ҫыракан поэт.
- К.Иванов шкулта ачасене чӑваш чӗлхипе вырӑс чӗлхине ҫырма, вулама тата ӳкерме вӗрентнӗ.
- Вӑл ҫырнӑ пуян калавем ҫаксем: «Нарспи», «Тӑлӑх арӑм», «Тимӗр тылӑ», «Икӗ хӗр».
- Мӗншӗн-ши «Нарспи» поэмӑна ҫынсем алӑран пӑрахмасӑр вулаҫҫӗ?
- Михетер Нарспи туйне тӑванӗсене чӗнет, шӑпӑр кӗввипе ташлаттарать.
- Ҫакна туй теме пулмасть.
- Тӑванӗсем килсен туй пуҫӳ ваттисене асӑнать, ҫӑкӑр-тӑвар тӑкать.
- Чӑвашӑн илемне, туй йӑлине К.Иванов ҫеҫ ҫырса хӑварнӑ.
- Йӗлтӗр ҫӑмӑллӑн шӑнать.
- Турат ҫине ула така пырса ларчӗ.
- К. Иванов шкулта лайӑх вӗренӗ.
- Сасартӑк манпа юнашар темиҫе ҫухрӑмракашкӑра курах кайрӑм.
- Йывӑр ӗҫпе аллӑ та ывӑнса ҫиртӗ.
- Художник илемлӗ ҫуллахи кун хушшинче интереслӗ хӗр арӑмсем ӗҫленине кӑтартнӑ.
- Хыҫалтисем вара пӳлӗме ҫӗнӗлетме штукатурка, обой ҫыпӑҫтараҫҫӗ.

### КАМА ЭПИР ЮРАТАТПӐР?




**Маша РОДИОНОВА,**
**5-мӗш класс,**
**Калайкасси шкулӗ**

# МУ—НАРТ

**Иван Васильевич паян кунӗпех лабараторинчен тухма пӗлмерӗ. Темӗн виҫрӗ, темӗн шутларӗ... Пӗчӗк ача пек хӗпӗртесе сиккелесе те илчӗ. Пӗр-май телефонпа такам патне шӑнкӑравларӗ, хурав кӗтсе илеймерӗ пулин те тарӑхмарӗ — тепӗр темиҫе минутран каллех телефон патне чупрӗ...**

Аякран пӑхса тӑракан ку ӑсчах ухмаха ернӗрен савӑнать терӗ те пулӗ. Анчах та эсир тӗрӗс мар шухӑшлатӑр. Василий Иванович темиҫе ҫул асапланнӑ хыҫҫӑн аранах ҫӗр ҫинче ҫук чӗр чуна чун кӗртме пултарчӗ. Сӗтел ҫинче ӑнланмалла мар шурӑ чӗр чун йӗри-тавра вӑл кунӗпех чупкаларӗ.



Тӑхтӑр-ха, тӑхтӑр, малалла кайиччен сире ӑнланмалла мар чӗр чун ҫинчен кӑштах каласа парам-ха. Унӑн пуҫӗ ӗне пуҫне аса илтерет. Урипе хӳри вара кӑвакалӑн пекех. Ҫуначӗсем те пур. Кӗлетки пӗчӗкрех ӗне пекех пысӑк. Тӗлӗнмелли чӗр чуна паян кӑна чун кӗчӗ — чӗри тапма пуҫларӗ...

—Аранах сан пата паян шӑнкӑравласа тухрӑм! Ӑҫта пурӑнатӑн? Вӑл чӗрӗ! Вӑл чӗрӗ! Илтетӗн-и, унӑн чӗри тапать!— пӗлхана-пӑлхана телефонпа каласрӗ Василий Иванович.— Ӗненместӗн пулсан хӑвӑртрах кил! Ой! Вӑл ҫунаттипе хускатрӗ,— терӗ те телефона пӑрахса чӗр чун еннелле чупрӗ.

Сӗтел патне чупса пырса каллех темӗн виҫрӗ, темӗн шутларӗ...

...Алӑк яри уҫӑлса кайрӗ те, лабараторие Михаил Кузьмич кӗрсе тӑчӗ:

— Апла вӑл пурӑнасшӑн?— тесе ыйтрӗ. Пӳлӗмре утса ҫӳрекен шурӑ чӗр чуна курсан пӗрре шурса, тепре хӗрелсе кайрӗ. — Эсӗ чӑнах савӑннипе ухмаха ернӗ пулӗ? Мӗншӗн вӑл ирӗклӗн утса ҫӳрет? Пире тапӑнсан? Хӑвӑртрах транквилизатор пар ӑна!— хытарсах каларӗ вӑл.

— Эсӗ ӑна чӗртнӗ-чӗртменех вӗлересшӗн-и? Халӗ те ҫыхса хунӑскере вӗҫертме тиврӗ, ҫунаттисемпе ҫапа-ҫапа сӗтеле те ҫӳле ҫӗклерӗ...

— Пар транквеилизатор!— итлесшӗн те пулмарӗ юлташӗ.

Иккӗшӗ тупӑшнӑ вӑхӑтра чӗр чун чӳрече умӗнчи чечексемпе апатланчӗ. Кайран карӑннӑ пек майне тӑсрӗ те: Му-нарт! Му-нарт! Му-нарт! тесе сасӑ пачӗ. Кӑна илтсен икӗ ӑсчах та ун еннелле ҫаврӑнчӗҫ те тӗлӗннипе ҫӑварӗсене карса пӑрахрӗҫ. Унтан пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ те шкаф еннелле ыткӑнчӗҫ. Чӗр чун ура ҫине тӑрса ҫунаттисемпе сулма пуҫларӗ. Сӗтелсем тата ҫӳлӗксем ҫинчен тӗрлӗ приборсемпе савӑтсем йӑлтах урайне ӳкрӗҫ. Ӑсчахсем чӗтрекен аллисемпе транквилизатор хатӗрлерӗҫ. Василий Иванович чӗр чуна тӗллесе маларах печӗ, анчах лектерейменерӗ. Михаил Кузьмич та чӗтрекен алӑсемпе нимӗн те тӑваймарӗ. Чӗр чун кӑна, хӑйне ҫывӑратса ярасшӑн пулнине ӑнланнӑн, чӳрече еннелле утрӗ. Хӑйӗн вӑйлӑ ҫунаттисемпе кантӑка ватса ҫӗмӗрчӗ те вун саккӑрмӗш хутран аялалла сикрӗ. «Ӳксе вилчӗ», — шухӑшларӗҫ ӑсчахсем, анчах та ҫав самантра ҫӳлеллӗ шурӑ чӗр чун вӗҫсе хӑпарчӗ те тепӗр хут вӗсене Му-нарт! Му-нарт! Му-нарт! тесе хӑратрӗ. Унтан ҫуначӗсемпе вӑшлатса хула хӗрринелле ҫул тытрӗ.

**Элли МАТВЕЕВА**
**«Хыҫалти парта» хаҫат валли**
**/ Малалли ҫитес номерте /**

# ҪУЛ ҪӲРЕВ

**Маша РОДИОНОВА,**
**5-мӗш класс,**
**Калайкасси шкулӗ**

 ҫунӑ хыҫҫӑн  тухса  савӑнтарчӗ.

Эпир йӗпе куракӑ пӑхмасӑр  урлӑ каҫса 

хӑваларӑмӑр. Пирӗн умра  ӳссе ларчӗ. Юмансемпе хурӑнсем айӗпе утма

ытла та интереслӗ мӗн, курмалли пайтах.  пуҫ ҫине ӳкет. Эпир 

 тата  татрӑмӑр,  тутанса пӑхрӑмӑр.